Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсенче

# "Йĕпе-сапана парăнмастпăр",–

*терĕ копалкăна чарса М. Димитриев механизатор*

Тăватă-пилĕк кун тăтăш çумăр çунă хыççăн уяр тăнă сентябрĕн 20-мĕшĕнче "Свобода" хуçалăхăн иккĕмĕш уй-хир бригадин "иккĕмĕш çăкăр" пуссине хĕвел анăçалла кайсан кăна çитрĕм. Хăйсене виççе панă анасем çинче халăх хыпаланса ĕçлени, унта та кунта машинăсем çине грузчиксем çĕр улми миххисене тиени, хирти ĕççене уй-хир бригадирĕ Владислав Иванов пăхса-тĕрĕслесех тăни, копалкăсем чарăнмасăр пĕр панă хăвăртлăхпа çаврăм хыççăн çаврăм туни инçетренех курăнчĕ. Малалла пыратăп. Уйпа утнă чух çĕр ура айĕнче пусăрăннинченех вăл лашкам çумăрпа шӳме ĕлкĕрни сисĕнет. Ку вара çĕр улми кăларас ĕçри йывăрлăхăн тĕп пайĕ. Хăйĕн ĕçĕнче ăнакăна самай курнă хресчен çу каçа пулман çумăра сивлемесĕр кĕрхи уяртнă кашни самантпа туллин усă курма тăрăшать. Ăна пулăшакансем те çур çултан каялла васкамаççĕ. Районĕпех çапла ку ӳкерчĕк.






"Свобода" хуçалăх ĕçлекенсене тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса пани районта кашниншĕнех паллă. Акă иртнĕ вырмара та, унчченхи çулсенчи пекех, комбайнерсемпе водительсем тата ыттисем, кун каçа тусанланнăскерсем, ĕç кунĕ хыççăн килĕсене ăшă душ кĕрсе кайни, тулăх ĕçшĕн тивĕçлĕ ĕç укçи тата натурăпа çителĕклĕ тӳлев илни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ĕç условийĕсем тивĕçтернĕренех кăçал çĕр улми кăларма пулăшма та хуçалăха Сарчаксемпе Шетмĕпуçсем, Муркашсем, Атăл урлă пурăнакан Сосновкăсем килсе çитрĕç. Паян вĕсем пурте пĕр çын пек çĕр улми пуссинче.

Хуçалăх элитăллă вăрлăхпа кăна ĕçленĕрен Кашмашсемпе Çатракассисем "иккĕмĕш çăкăр" вăрлăхне те çĕнетсех тăраççĕ. Çĕнни вара тухăçне те вăйлăрах парать. Ăна кăларса пухса илме техника тĕлĕшĕнчен хуçалăх копалкăсемпе анлă усă курать. Акă кăçалхи ĕççене те хуçалăхра 6 копалка хутшăнать. Вĕсемпе ĕçлекен М. Димитриев, И. Васильев, Г. Алжиров, А. Сергеев, А. Матвеев, Р. Толикин механизаторсем инженерсем пулăшнипе агрегатсене ĕçе тĕплĕ хатĕрлерĕç. Çавăнпа паян вĕсем уяр кунăн кашни саманчĕпе туллин усă курайраççĕ. Хиртен çĕр улми турттаракан С. Алжиров, В. Степанов, Е. Якимов, Н. Давыдов, Н. Харитонов водительсем те кăларнă çĕр улмине çийĕнчех хранилищĕсене турттарса хураççĕ.

– Вырма вĕçленнĕ-вĕçленмен "иккĕмĕш çăкăр" пуссисене тухрăмăр. Типĕ çу пулчĕ пулсан та, çĕр улми питĕ начарах мар. Ăна вăхăтра пуçтарса кĕртесчĕ тесе ĕçлетпĕр паян, – терĕ пĕрле ĕçлекен Илья Васильев механизаторпа калаçакан Меркурий Димитриев тракторист **(сăн ӳкерчĕкре)** шултра çĕр улмисене алла илсе.

…Копалкăсем малалла кайрĕç. Бригадир виççе панă анасемпе уй-хир ĕçченĕсем çĕр улми пуçтарма пуçларĕç. Ашшĕ-амăшĕсене пулăшма ачасем те тухни, вĕсем вăрвар ĕçлени хуçалăхра "иккĕмĕш çăкăр" кăларасси те вăраха каяс марри пирки пĕлтерчĕ. Акă сăн ӳкерчĕкри Сергей Алексеев та шкулта уроксем пĕтсенех амăшĕ патне хире килнĕ. "Аннене пулăшмалла, киле çитсен уроксем тумалла, ывăнма вăхăт çук", – терĕ ытти чух сăмах ваклама юратман Сергей. "Ачан шкулта кăна мар, ĕçре те воспитани илмелле", – терĕ çĕр улми пуçтарнă май калаçма вăхăт çуккине палăртса Ирина.

Хуçалăх кăçал çĕр улмин тăватă сортне – "удача", "чародей", "петербургский", "снегирь" – пĕтĕмпе 190 гектар çине лартнă.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Налук тӳлессин ыйтăвĕсемпе

# Пристав алăкран ан шаккатăр тесен

Раççей федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ предприятисемпе организацисем, уйрăм çынсемпе предпринимательсем налуксемпе ытти тӳлевсене мĕнле тӳлесе тăнине куç ытамĕнчен вĕçертмест. Çак тивĕçе пурнăçлассинчен пăрăнакансем тĕлĕшпе вара çирĕпрех мерăсем йышăнма тивет.

Кăçалхи сакăр уйăхра Муркаш районĕпе налук парăмĕсене парăмçăсен пурлăхĕ шучĕпе шыраса илме суд приставĕсем патне 151 постановлени тăратнă, пĕтĕмпе 7420 пин тенкĕлĕх. Вăл шутран 36,8 процентне е 44 предприятирен 2731 пин тенкĕ шыраса илнĕ. Уйрăм çынсем тĕлĕшпе 128 исполнительнăй документ ярса панă. Кунта налуксем, тӳлевсем, штрафсем, пенисем кĕреççĕ. Пĕтĕмĕшле парăм 130 пин тенкĕ. Вăл шутран налук тӳлекен 64 çынран 63 пин тенкĕ е 48,5 процент шыраса илнĕ.

Акă, налук тӳлевĕсем енĕпе парăма кĕнĕ уйрăм çынсенчен парăмсене шыраса илес тĕллевпе налук инспекцийĕ суд приставĕсен службин районти уйрăмĕн тата районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат сотрудникĕсемпе пĕрле сентябрĕн 14 тата 20-мĕшĕсенче рейдсем ирттерчĕ. Сентябрĕн 14-мĕшĕнче кăна пĕтĕмпе 10 пин тенкĕне яхăн пурлăха арестлеме тиврĕ. Вăл шутра телевизор та, кĕсье телефонĕ те, çемçе сĕтел-пукан та...

Налук инспекцийĕ налук тӳлекенсене пурне те çапла чĕнсе калать: «Налуксене вăхăтра тӳлĕр! Пурлăха арестлесси патне çитсе ан тăрăр! Хăвăрăн вăхăтпа укçа-тенкĕне перекетлĕр!» Парăма пурлăха арестлесе шыраса илнĕ чухне вара налук тӳлеме тивĕç çыннăн, парăм виçи 10-50 тенкĕ кăна пулсан та, вăхăт иртсе кайнă кашни куншăн пени Раççей Федерацийĕн Тĕп банкĕ финансланин 1/300 ставки чĕхлĕ, кунсăр пуçне патшалăх пошлини 10 тенкĕ, исполнительнăй тӳлев парăмăн 7 процентĕ чухлĕ тӳлеме тивет. Куратпăр ĕнтĕ, налуксене вăхăтра тӳленине нимĕн те çитмест.

Налук инспекцийĕ çавна аса илтерет: 2007 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче çак çулшăн уйрăм çынсен пурлăх тата çĕр налукĕсене тӳлемелли пĕрремĕш тапхăр çитрĕ. Апла пулсан налук тӳлевĕсен парăмĕсене вăхăтра парса татма сĕнĕ пулăттăмăр.

**И. ШАРОНОВА,**
**налук инспекцийĕн анализ, отчет тăвассин тата парăмсене йĕркелессин пайĕн пуçлăхĕ.**

Район прокуратуринче

## Ĕç укçине вăхăтра тӳлемелле

Район прокуратури предприятисемпе организацисенче ĕç укçине епле тӳлесе тăнине яланах тĕрĕслесе тăрать. Черетлĕ тĕрĕслев вăхăтĕнче вара «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществинче ĕçлекенсене ĕç укçи тӳлессипе парăм пуррине тупса палăртнă. Предприяти ертӳçисем ăна вăхăтра тӳлеме тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Ĕç укçине кунта икĕ уйăха яхăн тӳлеменни палăрчĕ. Хальхи вăхăтра асăннă предприяти тĕлĕшпе ĕç законодательствине пăснă тĕслĕхе пĕтерме представлени тăратма йышăннă. Прокуратура енчен ытти мерăсем йышăнасси пирки те ыйту тăрать. Ĕç законодательствине пăснă тĕслĕхсем пирки мерăсем йышăннă пулсан, вĕсене прокуратура кулленхи тимлĕхрен кăлармасть.

## Кирпĕч завочĕ – ыттисемшĕн тĕслĕх

Çынсем районта та, çĕршывра та епле пурăнасси чи малтанах хăйсенчен килет. Налуксемпе ытти тĕрлĕрен тӳлевсене вăхăтра тата йĕркеллĕ тӳлесе тăракан граждансем тата предприятисемпе организацисем пирĕн экономика аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ. Çак тӳлевсем ĕнтĕ бюджет тытăмĕн тĕп çăл куçĕ пулса тăраççĕ.

Çакна манма кирлĕ мар. «Бухгалтери учечĕ çинчен» Федераллă саккунăн 6-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн организацисенче бухгалтери учетне йĕркелесе пырассишĕн, хуçалăх ĕçне-хĕлне туса ирттернĕ чухне законодательствăна пăхăнассишĕн чи малтанах ертӳçĕсем ответлă пулса тăраçĕ.

Çавна палăртса хăварасшăн. Çак тивĕçе чăннипех те аван ăнланакансем те çук мар район территорийĕнче. Сăмахран, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционер обществинех илер. Чăннипех те ку предприятие ыттисем валли тĕслĕх теме пулать. Асăннă предприяти налуксене вăхăтра тӳлесе тăрать, тӳлев виçисемпе те интересленет.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Новинка

# НОВЫЙ ВЫПУСК КОМПАКТ-ДИСКА «КОНСУЛЬТАНТПЛЮС, ВЫСШАЯ ШКОЛА» ДЛЯ СТУДЕНТОВ ОТ ФИРМЫ "ЭЛИС"!

Компания «Консультант Плюс» к осеннему семестру 2007 - 2008 учебного года подготовила очередной, восьмой выпуск компакт-диска «КонсультантПлюс: Высшая школа». Диск предназначен для студентов юридических и экономических специальностей российских вузов и распространяется бесплатно.

Диск «КонсультантПлюс: Высшая школа» допущен Учебно-методическим объединением (УМО) по юридическому образованию и УМО по образованию в области финансов, учета и мировой экономики в качестве учебного пособия для студентов вузов, обучающихся по специальностям «Юриспруденция», «Бухгалтерский учет», «Налоги и налогообложение», «Финансы и кредит», «Мировая экономика».

Восьмой выпуск диска «КонсультантПлюс: Высшая школа» содержит:

- 14 000 документов из системы КонсультантПлюс: правовые акты федерального и регионального законодательства, материалы судебной практики, консультации в форме «вопрос-ответ», публикации юридической и бухгалтерской прессы, акты международного права и др.;
- раздел «Электронная библиотека студента», который состоит из двух частей:

1) «Современная литература»: учебники, рекомендованные учебными программами ведущих вузов страны по юридическим и финансово-экономическим дисциплинам, например: «Теория государства и права: Учебник для высших учебных заведений» (М.И. Абдуллаев), «Гражданское право» в 2 томах (под ред. О.Н. Садикова), «Международное частное право» в 3 томах (Л.П. Ануфриева) и др.

2) «Классическая литература»: труды выдающихся представителей отечественной юриспруденции, в частности: «Русское государственное право» в 2 томах. (Н.М. Коркунов), «Римское частное право» (под ред. И.Б. Новицкого и И.С. Перетерского), «Финансы и налоги: Очерки теории и политики» (И.Т. Тарасов, А.А. Исаев) и др.;

- раздел «Учимся работать с системой КонсультантПлюс», в который вошли интерактивное пособие «Как найти документ за 1 минуту», тренинго-тестирующая система, сборник задач по системе КонсультантПлюс;
- интерактивный мультфильм, хранители экрана, набор курсоров.

Широкомасштабная акция по распространению диска «КонсультантПлюс: Высшая школа» среди студентов проводится Сетью КонсультантПлюс с 2004 года. Диск выпускается дважды в год - к осеннему и весеннему семестрам учебного года. Суммарный тираж диска за все время его распространения составил уже более 1 755 500 экземпляров. В ходе акции каждый студент может бесплатно получить очередной выпуск диска в своем вузе или в информационном центре Сети КонсультантПлюс своего региона.

Выпуск диска «КонсультантПлюс: Высшая школа» является важной частью сотрудничества компании «Консультант Плюс» с учебными заведениями РФ. В рамках Программы информационной поддержки российской науки и образования более 1500 вузов и их филиалов по всей России, готовящих специалистов финансово-экономического и юридического профиля, имеют возможность работать с информацией из справочной правовой системы КонсультантПлюс. Так, по словам Косовца А.А., заведующего лабораторией правовой информатики и кибернетики юридического факультета МГУ им. М.В. Ломоносова: «Благодаря открытому доступу к ресурсам КонсультантПлюс учебный процесс стал гораздо эффективнее».

Более подробную информацию о новом выпуске компакт-диска «КонсультантПлюс: Высшая школа» можно получить у сотрудников Регионального Информационного Центра Сети КонсультантПлюс. ***В Чувашии представителем Общероссийской сети распространения справочной правовой информации КонсультантПлюс является Региональный Информационный центр "Фирма "Элис".***

**ООО "Фирма "Элис" предлагает всем своим пользователям следующие бесплатные сервисные услуги:**

**Индивидуальный подход в сопровождении каждого клиента**

**Возможность ежедневного обновления систем КонсультантПлюс**

**Проведение бесплатных семинаров для бухгалтеров (1в месяц) с привлечением лекторов из Управления Федеральной налоговой службы РФ по ЧР, Пенсионного фонда, Фонда социального страхования, ведущих аудиторских компаний города и др.**

**Проведение бесплатных семинаров для юристов (1в месяц) с привлечением лекторов из Управления судебного департамента ЧР, Управления Федеральной Службы Судебных приставов по ЧР, Управления федеральной Регистрационной службы РФ по ЧР, Арбитражного суда ЧР, известных адвокатов и др.**

**Предоставление бесплатных консультаций аудиторов (3 в месяц)**

**Предоставление бесплатных консультаций юристов и адвокатов (3 в месяц)**

**Бесплатный поиск документов по телефону ежедневно ("Горячая линия"-45-30-40)**

**Анонс поступления новых документов в систему**

**Бесплатное обучение работе с СПС КонсультантПлюс с выдачей сертификата**

**Бесплатные услуги по первичной установке СПС КонсультантПлюс с выездом специалиста**

**Бесплатное восстановление работоспособности системы.**

**Индивидуальная настройка СПС КонсультантПлюс на компьютере пользователя**

**Предоставление возможности работы с полным массивом правовой информации в СПС КонсультантПлюс в офисе ООО "Фирма "Элис" по адресу:**

**г. Чебоксары, Московский пр, д.14. Тел: 45-40-35, факс 42-31-71.**

**Фирма "Элис" всегда гарантирует качественный сервис.**

**А оптимальный баланс качества и цены позволяет каждому пользователю выбрать программу по его потребностям и возможностям.**

**Чтобы оперативно получить нужную информацию, клиенты Фирмы "Элис" могут воспользоваться «горячей линией» (телефон:45-30-40).**